## Пĕчĕк бизнес

# Пĕчĕк предприятисен пысăк ыйтăвĕсем

Çултан-çул район экономикинче пĕчĕк формăллă хуçалăхсен тӳпи ӳссе пырать. Паллах, ку хуçалăхсен йышĕ тата вĕсем туса кăларакан продукци калăпăшĕ ӳснипе çыхăннă. Паянхи кун, район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И.Симакова пĕлтернĕ тăрăх, пирĕн районта 96 пĕчĕк предприяти, 610 уйрăм предприниматель, 67 хресчен-фермер хуçалăхĕ, 19 ял хуçалăх потребительсен кооперативĕ, килти хушма хуçалăхсем пурĕ 13303 шутланса тăраççĕ. Пĕлтĕрхи çул пĕчĕк формăллă пур предприятисем пурĕ 610 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Ĕçсем япăх пымаççĕ. Апла пулин те предпринимательсемпе пĕчĕк предприяти ертӳçисене хумхантаракан ыйтусем çук мар. Иртнĕ эрнери предпринимательство кунĕнче хăш-пĕр ыйтусем çинче чарăнса тăчĕç.

Харпăр хăй ĕçне пуçланă чух кирлĕ документсене хатĕрлесси, арендăна çĕр лаптăкĕ е пĕр-пĕр çурт илесси, предприятие регистрацилесси питĕ вăрăма тăсăлнине пĕлтерчĕç предпринимательсем. Çавăнпа та А.С. Портнов уйрăм предприниматель ĕç пуçласа яракансене уйрăмах тимлĕ, çине тăрса ĕçлемеллине каларĕ. Тăрăшуллисем çеç хăйсене валли çул уçма пултараççĕ.

Ĕçе пуçлама çăмăл мар. Анчах ăна пуçарса ямашкăн халĕ тĕрлĕрен пулăшу пур. Тĕслĕхрен, банксенче салукçăр кредитпа та ĕçлеççĕ. Тепĕр чух тата поручитель кирли те йывăрлăх пулса тăрать. Çак лару-тăрура вара предпринимательсене Гаранти фончĕ пулăшать. Вăл поручитель пулма пултарать.

Пĕчĕк формăллă предприяти ертӳçисене налук ыйтăвĕ та канăç памасть иккен. Уйрăмах пассажирсене турттаракан транспорт хуçисем тата суту-илӳ тăвакансем налуксем пысăк пулнă пирки калаççĕ. «Тепĕр чух ют çĕршывра кăларнă автомашинăсем валли саппас хатĕрсене вăхăтра тупайманни те ĕçе чарса тăрать», - терĕç предпринимательсем. Пăшăрханакансем ку ыйту çине тулли хурав илчĕç. Налука ĕçленине пăхса тӳлесси çинчен налук службин специалисчĕсем тепĕр хут аса илтерчĕç, ăнлантарса та пачĕç.

Ĕç лайăх аталанса пытăр тесен предприятисенче хăй ĕçне пĕлекен ăста специалистсем кирлĕ. Ĕçлекенсен квалификацине ӳстерес тесе, паллах, ертӳçĕн те тăрăшмалла. Хальхи вăхăтра Бизнес технологийĕн шкулĕ ку тĕлĕшпе пысăк пулăшу парать. Вĕрентӳшĕн тӳлемелли хакăн пĕр пайне саплаштарма пултарать. Ĕçе пĕлсе тĕрĕс йĕркелекенсене вара паян пур çĕрте те хаклаççĕ.

Суту-илӳ точкисем хушăнса пыни те, хăйсен ĕçне пуçарса яракан уйрăм çынсен хисепĕ пысăкланни те çак секторта тупăш илме пулассине кăтартса парать. Саккунсене пăхăнса ĕçлемелли çеç юлать.

**Н.НИКОЛАЕВА.**

## Демографи ыйтăвĕсем

# ЗАГС мăшăрланакансене кĕтет

***Виçĕ уйăх сисĕнмесĕрех хыçа юлчĕ. Çак вăхăтра пирĕн районти демографилле лару-тăру та, паллах, улшăнчĕ. Кун пирки район администрацийĕн ЗАГС пайĕн ертӳçи М.П. РУБЦОВА каласа пама килĕшрĕ:***

- Малтанах ачасем çурални çинче чарăнса тăрас килет. Шел пулин те, пĕлтĕрхи пĕрремĕш кварталпа танлаштарсан, кăçалхи çак тапхăрта пепкесем сахалрах çуралчĕç. Виçĕ уйăх хушшинче 92 ача çут тĕнчене килчĕ. Пĕлтĕр вара ку хисеп 101-пе танлашнăччĕ. Муркаш (11ача) тата Мăн Сĕнтĕрпе Çатракасси (10-шар) ял тăрăхĕсенчи катартусем ыттисенчен пысăкрах. Ачасем кашни ял тăрăхĕнчех çуралчĕç.

– **Вилекенсем чакрĕç-и тата? Вĕсем çинчен мĕн калама пултаратăр?**

– Вилекенсен хисепĕ кăшт чакни савăнтарать. 153 çын çĕре кĕчĕ çак кварталта. Пĕлтĕрхинчен 13 сахалрах. Анчах та вĕсен хушшинче хăй вилĕмĕпе вилменнисен хисепĕ, уйрăмах арçынсен, пĕчĕк мар. Хуйхи-суйхи нумайрах-ши вĕсен е чăтăмлăхĕ сахалрах-ши? Калама хĕн. Вилекенсен вăтам вăхăчĕ çакăн пек: арçынсен - 62 çул, хĕрарăмсен - 76 çул. 60 çула çитмен 33 арçыннăн, вăл вăхăтран иртнĕ 49 арçыннăн пурнăçĕ татăлнă.

– **Мăшăрланассипе лару-тăру еплерех?**

– Кăçал високослă çул пулнипе малтанах мăшăрланакансен хисепĕ пĕлтĕрхинчен сахал пулать пуль тесе шутланăччĕ. Шутлани тĕрĕсех пулмарĕ иккен. Çак виçĕ уйăхра пирĕн ЗАГС пайĕнче 41 çемье йĕркеленчĕ. Пĕлтĕрхинчен 12 нумайрах. Уйрăлакансен шучĕ - 15(18).

Типĕ вăхăтĕнче тата май уйăхĕнче пĕрлешекенсем сахал. Пĕлтĕр «виçĕ çиччĕ çулĕ» теттĕмĕр, кăçал вара «виçĕ саккăр çулĕ», унпа пĕрлех Республика кунĕ те Муркашра иртмелле. Çавăнпа та çемье çавăракансем нумайрах пуласса шанатпăр.

**– Тавах, Маргарита Петровна, калаçушăн.**

**Н.НИКОЛАЕВА калаçнă.**

## Редакци почтинчен

# *Ăçта вĕренме каймалла?*

Вăхăт хăйĕн чуппине пĕр чакармасăр малалла ыткăнать. Тытса чарайми иртет ачалăхăн шухăшсăр, хаваслă вăхăчĕ. Тин кăна эпир вĕренӳ тĕнчине кĕртекен шкул алăкне уçса парта хушшине ларнăччĕ, халĕ вара юратнă шкулăмăрпа сыв пуллашма та вăхăт çитет. Шкул алăкĕнчен тухсан ăçта вĕренме каймалла? Çак ыйту пире, паллах, тахçанах шухăшлаттарнă. Пин-пин профессирен пĕрне, хамăра çывăххине мĕнле суйласа илмелле-ха? Тата паянхи кун эпир пĕлмен çĕнĕ профессисем нумай. Мĕнле ĕçсем вĕсем? Вăл е ку профессие ăçта вĕренсе алла илме пулать? Çак ыйтусем çине хурав тупма пире юратнă вĕрентекенсем пулăшаççĕ.

Ака уйăхĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 18-мĕшĕччен «Санăн професси суйлавĕ» ятпа акци иртрĕ. Çак вăхăтра пирĕн шкулти вĕрентекенсем çак акципе çыхăннă нумай ĕçсем туса ирттерчĕç, кĕçĕн классем профессисен тĕнчипе интереслĕ вăйă, аслăрах классем тĕрлĕ хăнăхтарусем, калаçусем, тупăшусем урлă паллашрĕç.

Професси суйласа илнĕ чухне вăл малашне чăнах та кирлĕ пулмаллине те шута илме сĕнеççĕ вĕрентекенсем. Эпир çак хушăра вăл е ку профессие сăнласа паракан кĕнекесемпе, видеоматериалсемпе паллашрăмăр. Çакă пире palăрмаллах пулăшу кӳрет.

Манăн тантăшăмсем 9 класс хыççăн малалла урăх шкулсенче тата училищĕсенче вĕренесшĕн. Темле пулсан та пулас професси пирки паянах шутламаллине ăнланаççĕ вĕсем. Ман шутпа, суйласа илнĕ професси чи малтанах çынна савăнăç кӳмелле. Апла пулсан, манăн професси суйлавĕ умĕнче тăракансене пурне те ăнăçу сунас килет.

**Катя ЯКОВЛЕВА,**
**Сыпай шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекен.**

## Аукцион

«ЗАО «Специализированная организация «Волжский аукцион» в соответствии с постановлением главы администрации Моргаушского района Чувашской Республики №568 от 12 декабря 2007 г., 14 апреля 2008 г. в 10 часов 00 минут по адресу: 428034, Чувашская Республика, г. Чебоксары, бульвар Юности д. 3, проводит торги по продаже земельного участка:

**Лот №1,** земельный участок с кадастровым номером 21:17:27 13 01:0023, категория земель – земли населенных пунктов, площадью 1215 кв. м., местоположение: участок находится примерно в 35 м по направлению на северо-запад от ориентира здание магазина, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Старые Мадики, ул. Школьная, д. 2, для строительства индивидуального гаража.

Начальная цена 10290 (десять тысяч двести девяноста) рублей, шаг аукциона 520 (пятьсот двадцать) рублей, сумма задатка 2100 ( две тысячи сто) рублей.

Технические условия для подключения к инженерным коммуникациям:

Технические условия на подключения к сетям водоснабжения: точка подключения - ул. Школьная, д. Старые Мадики Моргаушского района ЧР, напор воды в точке подключения – 1, 5-2 КгсЎсм, расстояние от точки подключения – 100 м., максимальный расход воды – 100 л Ўсут., материал существующего трубопровода в точке подключения – чугун, диаметр – 80 мм.

Технические условия на подключение к электроэнергии: электроснабжение объекта выполнить на напряжении 0,22 кВ, от линии ВЛ-0,4кВ по ул. Школьная, д. Старые Мадики Моргаушского района ЧР, максимальная активная нагрузка 2,5 к Вт, стоимость подключения к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по фактическим ценам на дату подключения.

Обязательства победителя аукциона:

- оплата полной стоимости земельных участков и помещений по итогам аукциона в течение 7 дней со дня проведения аукциона;

- заключение договора купли-продажи в течении 10 дней со дня подписания протокола.

- Критерий выявления победителя – максимальная сумма предложенная участником аукциона.

Форма подачи предложений по цене – открытая.

1. Дата начала приема заявок 12 апреля 2008 года, окончание приема заявок – 12 апреля 2008 г.

Задаток должен быть перечислен до 17 часов 00 минут 8 мая 2008 г.

Прием заявок на участие в аукционе осуществляется с 9 часов 00 минут до 17 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, гор. Чебоксары, бульвар Юности, дом 3, справки по телефону: 8 (8352) 48-56-97, 41-96-25, 2-12-66.

Перечень документов, предоставляемых претендентами для участия в аукционе:

1. Заявка на участие в аукционе установленного образца в двух экз.;

2. Платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение задатка;

3. Выписка из единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии паспорта удостоверяющих личность – для физических лиц.

Порядок возврата задатка.

– в случае отзыва заявки на участие в аукционе, до даты проведения аукциона, задаток возвращается в течение 3 банковских дней со дня поступления уведомления об отзыве заявки;

– в случае, если заявитель аукциона не выиграл, задаток возвращается заявителю в течении 3 банковских дней со дня подведения итогов аукциона.

Реквизиты счета для зачисления сумм задатков:

Закрытое акционерное общество «Специализированная организация «Волжский аукцион», ИНН 2128050182/КПП 212801001,р/сч. 40702810200000002149, в ООО КБ «Мегаполис» гор. Чебоксары, БИК 049706723, к/сч. 30101810600000000723. Назначение платежа: задаток на участие в аукционе лот № ——.»

**Генеральный директор**
**С.А. КОСТРОВА.**

## Спорт

# Юнкă шкулĕн вĕренекенĕ палăрнă

Апрелĕн 14–16-мĕшĕсенче Шупашкарта инвалидсем хушшинче бадминтонла выляса республикăра мала тухассишĕн ăмăртусем иртнĕ. Унта пирĕн районти Юнкă шкулĕнчи Павел Селюшкин палăрма пултарнă. Хальхи вăхăтра спортăн ку енĕ инвалидсем хушшинче ытлах сарăлман пулин те, П. Селюшкин иккĕмĕш вырăн йышăнма пултарнă, республика команди шутне кĕнĕ. Малта вара Раççей чемпионатне хатĕрленессипе тренировкăсем кĕтеççĕ.

**А. МИХАЙЛОВА.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:07 05 02:222, местоположение: участок находится примерно в 345 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, д. 7, площадью 5661 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

GALACTIKA

Магазин GALACTIKA предлагает:
Компьютеры, ноутбуки, оргтехнику, комплектующие. Спутниковые антенны -- от 5000р., с установкой – 6000р.
Работаем в КРЕДИТ !!!
Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.4, здание «Дом Быта»;тел. 2-13-79, 8-9083045640

**Покупаю металлический гараж. Тел.: 8906-387-77-08.**

**Опытный педагог снимет комнату или квартиру в с. Моргауши. Не пьет, не курит. Своевременную оплату гарантирует. Тел.: 8-905-345-21-80.**

**Продаю УАЗ-3962, санитарка, 1999 года выпуска, в хорошем состоянии. Цена договорная.**
**Тел.: 64-5-27, 8-906-386-51-03.**

**ООО «Энергосервис» срочно требуются: электрогазосварщик на временную работу, рабочие в производственный цех для изготовления железобетонных изделий. Оплата сдельно-премиальная, своевременная не ниже 7000 руб. Обращаться в администрацию.**
**Тел.: 8(83541)60-2-39, 8-905-342-98-11.**

**Сниму квартиру в центре с. Моргауши на длительный срок. Чистоту и порядок гарантирую.**
**Тел.: 8-919-673-24-74, 41-61-32.**

**СХПК им. В.И. Чапаева реализует бычков и телят в возрасте до двух месяцев. Цена 75 рублей за 1 кг.**
**Тел.: 61-2-95, 8-906-380-58-39.**

**Продаю земельный участок площадью 0,40 га с надворными постройками в д. Сюлово Тораевского с/п.**
**Тел.: 8-909-300-67-31 (звонить вечером).**

**Хура-шурă тĕслĕ март уйăхĕнче пĕрремĕш хут пăруланă ĕне сутатпăр. Адресĕ: Хорнуй ялĕ. Тел.: 8-927-863-76-40.**

**Срочно продаю ВАЗ-21043 зеленого цвета, 1998 года выпуска, в отличном состоянии.**
**Тел.: 60-087, 8-927-867-91-11 (звонить в любое время дня).**

**Моргаушскому линейно-техническому цеху связи на постоянную работу требуются водители 1 класса с опытом работы. Оплата по штатному расписанию.**
**Обращаться по адресу: с. Моргауши, ул. Мира, 6.**
**Тел.: 2-10-91.**

**Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19.** 2-6.

**Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97.** 11-13.

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения, выдает займы. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41.** 15-20.

**Предприятию для работы в Чувашской Республике требуются машинисты автогрейдера, катка, экскаватора; бульдозеристы. Зарплата от 18 тыс. рублей.**
**Тел.: (8352)69-43-85.** 8-8.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ 109 çулхи
**Перасковия Ивановна ИВАНОВА**
пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ кунта нумай çул хушши медсестрара ĕçленĕ
**Раиса Трофимовна МАТВЕЕВА**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕн коллективĕ кунта чăваш чĕлхипе литература учителĕ пулса ĕçлекен Е.В. Иванован амăшĕ
**Иустина Дмитриевна АНДРЕЕВА**
чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38. Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 22.04.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3637.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.